Ĕçсĕрлĕх ыйтăвĕсемпе

Ĕçсĕррисем сахалрах пулччăр

Çынсене ĕçпе тивĕçтерес енĕпе Чăваш Республикин 2009 çулхи программипе килĕшӳллĕн сахал мар ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Вăхăтлăх ĕç вырăнĕсем йĕркелеме, ĕç опычĕ илме стажировкăра пулма 733 çынна явăçтарнă. Пĕтĕмĕшле сумма 12 миллион тенкĕпе танлашать.

2008 çулхи декабрь уйăхĕн вĕçĕнчех район администрацийĕпе пĕрле хушма ĕç вырăнĕсем тупса парассипе предприятисемпе организацисене тупса палăртассипе ĕçлеме тытăннă. Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнчех Муркаш районĕнчи тĕрлĕ сферăсенчи ĕç-хĕле йĕркелесе пыма ведомствăсем хушшинчи кризиспа кĕрешмелли комисси йĕркеленĕ. Ăна йĕркелесси пирки район администрацийĕн пуçлăхĕн 2008 çулхи декабрĕн 30-мĕшĕнче 761 № йышăну пулнă.

Асăннă комисси 2009 çулхи январĕн 26-мĕшĕнче тата февралĕн 16-мĕшĕнче ларусем ирттерчĕ. Вĕсенче ĕç рынокĕнчи ыйтусене сӳтсе явăмăр.

Мартăн 5-мĕшĕнче канашлăва районти предприятисемпе организацисен ертӳçисене, Ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службин республикăри ертӳçин çумне Т.А. Аскарована чĕнтĕмĕр. Унта ĕçпе тивĕçтерекенсем 79-ăн хутшăнчĕç. Канашлăва хутшăнакансем ĕçпе тивĕçтересси енĕпе сведенисем, ăнлантару тата хатĕрлев пирки информаци илме пултарчĕç.

Асăннă лару хыççăн предприятисемпе килĕшӳсем тăвас ĕç пуçланчĕ. 2009 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне Программăна кĕртнĕ пур предприятисемпе те тенĕ пекех килĕшӳсем хатĕрленĕ. Сăмахран, «Сеспель» предприятипе 212 ĕç вырăнне сыхласа хăварма 3,5 миллион тенкĕлĕх, вĕрентӳ учрежденийĕсемпе обществăлла 123 ĕç вырăнĕ йĕркелеме 2 миллион тенкĕлĕх ытла, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕпе 442,6 пин тенкĕлĕх, ял тăрăхĕсен администрацийĕсемпе 1,3 миллион тенкĕлĕх 80 ĕç вырăнĕ валли, «Ударник», «Свобода», Чапаев яч. хис. хуçалăхсемпе 885,3 пин тенкĕлĕх 180-шар ĕç вырăнлĕх килĕшӳсем тунă.

Кунпа пĕрлех ĕçпе тивĕçтерессин программине кĕртме май пур хушма предприятисемпе организацисене те палăртнă. Кусем вĕсем «Моргаушская» строительство организацийĕ (20 вырăн), Муркашри юсавпа техника предприятийĕ (26 вырăн), Ильич яч. хис., Е. Андреев яч. хис., «Герой» хуçалăхсем (18-шар вырăн) «Волгодорстрой» уçă акционер обществи шучĕпе. Мĕншĕн тесен асăннă предприятире пирĕн районтан 19 çын кăна ĕçлет.

Çапла вара хальхи вăхăта обществăлла ĕçсене вĕрентӳ тата ДЭП çуллĕр учрежденине 145 тата 90 çынна янă, мартăн 16-мĕшĕнчен тытăнса 19 çын ĕçлеме тытăннă.

Районта çынсене хăйсен ĕçне уçма пулăшассипе тимлетпĕр. Ку енĕпе ĕç ушкăнне 5 çынран йĕркеленĕ. Унта район администрацийĕн экономика пайĕн пуçлăхĕ Э.И. Симакова та кĕрет. 4 çын хăйсен ĕçне йĕркелеме кăмăл турĕ. Пурте вĕсем ĕçсĕррисем тесе учетра тăраççĕ. Алексей Игоревич Маринкин Мăн Сĕнтĕрте çăм таптармалли цех вырнаçтарассипе ĕçлеме кăмăл турĕ. Унăн тĕп ĕçĕ ял хуçалăх предприятийĕсемпе уйрăм çынсенчен çăм таптарма йышăнассипе, кăçатăсем хатĕрлессипе çыхăннă. Проект хăйне 20 уйăх хушшинче саплаштармалла. А.И. Маринкин 2009 çулта 341 пин тенкĕ тупăш илме шутлать.

Валерий Николаевич Семенов çĕр улмин элита вăрлăхне туса илессипе хресчен (фермер) хуçалăхне йĕркелесшĕн. Оринин ялĕнче пурăнакан Андрей Славович Иванов хăйĕн участокĕнче хурт-хăмăр ĕрчетесшĕн, Юнкăра пурăнакан Максим Валериевич Романов вара ял хуçалăх продукцине туса илессине тата тирпейлессине аллă илме кăмăл турĕ.

Ĕçсĕр шутланакан 1 çынна вăхăтлăх е яланлăх ĕçлеме Ямало-Ненецк автономи округĕнчи «Тазагропрыбпром» чикĕллĕ яваплăхлă обществăна ĕçлеме кайма хатĕрлерĕмĕр. Задани – 5 çын.

Кашни эрнерех тунти кунсенче район администрацийĕн пуçлăхĕ ирттерекен канашлусенче районти ĕç рынокĕнчи лару-тăрупа паллаштаратăп. Асăннă ыйтусемпе республикăри «Хыпар» тата районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçатсенче 6 материал пичетлесе кăларнă.

2009 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне районĕпе ĕçсĕррисем 296 çын, ĕçсĕрлĕх шайĕ 1,35 процент. 2008 çулхи çав вăхăта ку кăтартусем 128 çын тата 0,6 процент пулнă.

Т. АНТОНОВА,
районти ĕçпе тивĕçтерекен центр ертӳçи.

Ыйту – хурав

Çурт картишĕнче хăрушлăх пулмалла мар

«Эпир, Муркашри Заводская урамри 15-мĕш тата 17-мĕш номерлĕ çуртсенче тата Коммунальная урамри 4-мĕш çуртра пурăнакансем, хамăра тахçанах канăç паман ыйтăва татса парасса шанса, хаçата çырас терĕмĕр.

«Путене» ача садне ирсерен хăйсен ачисене автомашинăсемпе леçекенсене тата каçпа илсе каякансене пирĕн çуртсем умне кĕме чармалли пирки çырупа эпир район пуçлăхĕ патне тухнăччĕ. Çырăва пăхса тухнă хыççăн район пуçлăхĕн çумĕ В.Г. Никитин çак вырăна автомашинăсене кĕме юраманни çинчен ятарлă паллă лартасси çинчен пĕлтерчĕ. «Путене» садикре те ку ыйтупа пуху пулса иртрĕ. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин, патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн представителĕсем те пулчĕç унта.

Район пуçлăхĕ патне çырупа февралĕн 9-мĕшĕнче тухнăччĕ. Çак таранччен те ыйту вырăнтан тапранмасть-ха. Пирĕн ачасен çурт умĕпе иртсе çӳреме те хăрушă. Косаревсем, Любимовсем, Черновсем тата ыттисем те». Çырура вара пурĕ 60 çын алă пуснă.

Çак ыйту çине хурав шыраса эпир капиталлă строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх управленийĕн пуçлăхĕпе В.Г. Никитинпа çыхăнтăмăр. Владимир Германович ку ыйтăва татса памалли полномочи Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ çинче пулнине пĕлтерчĕ. Вăл Н.И. Никитина çак çуртсем патне автомашинăсем кĕме юраманни çинчен калакан паллăна вырнаçтарма хушнине каларĕ. Çак кунсенчех нумай çынна канăç паман ыйту тавра Н. И.Никитинпа тепре калаçма шантарчĕ.

Редакци ĕçченĕсен çыру килнĕ кунсенче Н.И. Никитинпа çыхăнма май пулманни пирки вулакансене ĕç епле пынине çийĕнчех пĕлтерейместпĕр.

Асăну каçне чĕнетпĕр

Шăллăма асăнса

2006 çулхи ака уйăхĕн 17-мĕшĕ. Тӳлек те лăпкă кун. Хĕртсе хĕвел пăхать, юр ирĕлет, шарласа шыв юхать, кайăксем чарăнми чĕвĕлтетеççĕ. Çут тĕнче ыйхăран вăранать. Куç тулли илем. Анчах çак илеме курма май килмерĕ Валерăн. Ăна валли мар çак илем.

...Валерий Порфирьевич Котлов Шомик ялĕнче 1954 çулхи кăрлач уйăхĕн 27-мĕшĕнче 7 ачаллă çемьере çуралнă. Малтанах Шомикри тĕп шкултан, унтан Анат Кĕнерти вăтам шкултан вĕренсе тухнă. Ытларах математикăна килĕштернĕ, олимпиадăсене хутшăнса малти вырăнсене тивĕçнĕ.

Çарта пулнă хыççăн 1974 çулта Шупашкарти И.Яковлев ячĕллĕ чăваш патшалăх университечĕн физикăпа математика факультетне вĕренме кĕрет. Пултаруллă çын пур çĕрте те пултарать. Вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пынисĕр пуçне обществăлла ĕçсене те хутшăнать. Вĕренӳ çулĕн пĕтĕмлетĕвĕсене кура кашни çулах Хисеп грамотисем илме тивĕç пулать. 1978 çулта унăн ятне пединститутăн профсоюз организацийĕн Хисеп кĕнекине кĕртеççĕ.

Алла диплом илнĕ çамрăк специалиста 1979 çулта Калайкассинчи вăтам шкула яраççĕ. 1979 çултанпа ВЛКСМ Муркаш райкомĕнче ĕçлеме тытăнать, иккĕмĕш секретаре çити ӳсет. Кайран вара Валерий Порфирьевич «Гигант» хуçалăх директорĕн çумĕ пулса та, вырăнти профсоюз комитечĕн председателĕнче те ĕçлерĕ. Хисеп грамотисем кăна унăн 35.

52 çулти вăй питти арçын пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлса кайрĕ. Вăл çукки пирĕншĕн – пысăк çухату, йывăр хуйхă. Яланах пулăшма тăрăшатчĕ. Кама ĕçпе, кама сĕнӳпе. Аслă çынпа аслă çын пек, ачапа ача пек, çамрăкпа çамрăк пек калаçатчĕ. Анне йывăр чирлесе вырăнпах выртсан та вăл пăхрĕ, пире, йăмăкĕсемпе пиччĕшĕсене, шăллĕсемпе аппăшĕсене, яланах кăмăллă кĕтсе илетчĕ.

Тăванĕсемшĕн, кӳршисемшĕн, ĕçтешĕсемшĕн, юлташĕсемшĕн Валера яланах асра.

Апрелĕн 19-мĕшĕнче Валерий Порфирьевич Котлова пĕлнисене, унăн пĕлĕшĕсене, кӳршисене, юлташĕсене, пускилсене унăн тăван килне Шомик ялне кăнтăрла иртни 2 сехете чĕнетпĕр. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа 3 çул çитнине аса илĕпĕр.

Зинаида МАРКИЯНОВА (КОТЛОВА).

Района йĕркеленĕренпе – 65 çул

Пурнăçне çĕр ĕçне халаллана

ЧР Президенчĕ Н.В. Федоров 2009 çула Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ тесе пĕлтерчĕ. Çĕр-аннемĕр пире тăрантарать, хăйĕн ытамĕнче усрать. Ял çынни çакна питĕ лайăх ăнланать.

Муркаш районĕ нихăçан та япăххисен шутĕнче пулман, кирек хăш енĕпе те ыттисемшĕн тĕслĕх шутланнă. Ку вăл, чи малтанах, унта ĕçчен те пултаруллă çынсем пурăннинчен килнĕ.

Манăн паян çакăн пек пултаруллă çын, ырă ята тивĕçнĕ Л.Т. Каргин ĕç ветеранĕпе паллаштарас кăмăл пур. Леонид Трофимович 1930 çулта Муркаш районĕнчи Мемеккасси ялĕнче çуралса ӳснĕ, халĕ вара Ильинка ял тăрăхне кĕрекен Вăрманкасси ялĕнче пурăнать.

Шкулта вăл 1937–1943 çулсенче вĕреннĕ. Вăрçă çулĕсенче никама та çăмăл пулман. Ял çыннишĕн вара пушшех те. Мĕншĕн тесен вăйпитти арçынсем вăрçă хирĕнче. Алла канлĕх – пыра хурлăх, тенĕ ĕлĕкех ваттисем. Фронта та пулăшмалла пулнă. Лашасенчен ытларахăшне вăрçа илсе кайнă, хуçалăхсене çĕнĕ техникăпа пуянлатма майсем пулман. Чылай ĕçсене уй-хирте хĕрарăмсемпе çул çитмен çамрăксен пурнăçлама тивнĕ.

Л. Каргин та, мĕн пĕчĕкрен ĕçе хăнăхнăскер, тӳрех колхозра аслисемпе пĕрле вăй хума тытăннă. Çуркунне уйсене лаша кӳлсе плугсемпе сухаланă, хыççăн йывăç сӳресемпе сӳреленĕ. Çĕр пулăхне ӳстерме уй-хире тислĕке те лашасемпех турттарнă.

Вăрçă хыççăн та çăмăл пурнăç тĕлленмен. Юхăннă хуçалăха ура çине тăратмалла пулнă. Л. Каргин та, 16 çулхи çамрăк, 1946 çулта вăрман каснă çĕре хутшăнать. Йывăççсене лашасемпе шыв хĕрне турттарнă, çуркунне вара шыв тăрăх анаталла юхтарнă. Çамрăк йывăççсем те нумай лартнă.

Л. Каргин 1949 çулта çуркунне Шупашкар пристанĕ çумĕнчи Атăл юхан шывĕн тури пароходствинче ĕçлеме пуçлать. Çул çитсен кунтанах çар ретне тăрать. Вăл 5 çул хушши Лăпкă океан флочĕн «Вечный» ятлă карапĕ çинче службăра пулать. Çак карап ун чухне чи лайăххисен шутне кĕнĕ. Кунта та чăваш каччи ыттисемшĕн тĕслĕх пулса тăнă, хăйĕн салтак тивĕçне тӳрĕ кăмăлпа пурнăçланă.

Салтак тивĕçне пурнăçланă хыççăн яла таврăнать, Шатракасси ялĕнчи Феонила ятлă хĕрпе çемье çавăрать.

1956 çулхи январь уйăхĕнче хастар та пултаруллă çамрăка бригадир пулма шанаççĕ. Малтан «Волга» колхозра, хыççăн «Хлебороб» хуçалăхра 36 çул хушши бригадирта вăй хурать. Çынсемпе ĕçлеме пĕлни, мал ĕмĕтлĕ пулни, çĕре юратни ăна кунсерен пулăшса пынă.

Кунта çакна та асăнса хăвармалла. Л. Каргин çĕршыв чĕннипе 1962 çулта çерем çĕрсене уçма хăйĕн çемйипех Тюмень облаçне тухса каять. Кунта вĕсем 6 çул пурăнаççĕ. Леонид çак тапхăрта каллех бригадир пулса тимленĕ.

Тăван хуçалăхра тыр-пул акса ӳстернипе пĕрлех çĕр улми, хăяр, купăста лаптăкĕсем пысăк пулнă. Пысăк тухăç илсе ăна Çĕрпӳ хулине çитичченех ăсатнă.

Леонид Трофимович бригадир тивĕçĕсене яланах чыслăн пурнăçланă. Çав вăхăтрах сысна ферми те ун çинче пулнă. Çурасем ытларах илес, сыснасене ӳт ытларах хуштарас тесе вăл ферма ĕçченĕсене хавхалантарса пырасси пирки те манман.

Çемьере килĕшӳ, пĕрпĕрне ăнланса, пулăшса тăни кирлĕ. Ун чухне тин ĕçлес кăмăл çĕкленет, ăнăçу та пулать. Каргинсен çемйине ку тĕлĕшпе ӳпкелеме май çук. Леонид Трофимовичăн мăшăрĕ Феонила Николаевна пултаруллă та чăтăмлă çын, лайăх мăшăр пулнă, ачисене тĕрĕс воспитани пама пултарнă. Каргинсем 5 ача пăхса ӳстернĕ. «Ача амăшĕ-героиня» ята та Феонила Николаевна чăннипех тӳрре кăларнă.

Сăмах май, вĕсен ачисем пирки асăнса хăварсан та ытлашши пулмĕ. Аслă хĕрĕ Людмила учительница, Муркаш шкулĕнче кĕçĕн классене вĕрентет. Алевтина Шупашкарта чикĕллĕ яваплăхлă «Березка» обществăра тăрăшать. Родион – «Хлебороб» ООО директорĕн производство енĕпе ĕçлекен çумĕ. Юрий – Раççейри Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи шыв çинчи хăрушсăрлăх енĕпе ĕçлекен патшалăх инспекцийĕн аслă инспекторĕ. Кĕçĕнни Галина Вăрманкассинчи пуçламăш шкул-ача садĕнче директорта тăрăшать.

Леонид Трофимовичăн шăллĕ Виссарион Трофимович Балтика флотĕнче 4 çул çар службинче тăнă хыççăн 40 çул хушши боцман пулса тинĕссемпе океансен ытамĕнче тимлет. Тĕнчере вăл çитмен материк та сахал пулĕ.

Çак çемье çинчен ыррине татах нумай калама май пур. Ялта та вĕсем пирки лайăх-хине кăна илтетĕн. Ялта вара çынран нимĕн те пытарăмăн, пĕтĕмпех куç умĕнче.

Леонид Трофимовичăн хастар ĕçне Тăван çĕршыв пысăка хурса хаклана. Тухăçлă тыр-пул, çĕр улми, тымар çимĕç туса илнĕшĕн вăл «Вун иккĕмĕш пилĕк çуллăх ударникĕ», «Коммунизмла ĕç ударникĕ» хисеплĕ ятсене, республика шайĕнчи дипломсемпе Хисеп грамотисене тивĕçнĕ.

Çулĕсемпе çамрăках мар пулин те, ĕмĕрĕпех çĕр çинче ĕçленĕскерĕн халĕ те чунĕ çĕр шăпишĕн канăçсăрланать. Кĕçех сакăр теçеткене çитекенскере паян никам та хăйĕн çулне памасть, мĕншĕн тесен Леонид Трофимович яланах тирпейлĕ çӳрет, хастарлăхне çухатмасть, кӳршисене те кирек хăçан та пулăшма тăрăшать, чĕнсен нихăçан та хирĕçлемест.

Ĕçрен хăраман ăста пулнă. Л.Т. Каргин карçинккасем, милĕксем килĕшӳллĕ çыхать, ĕçлеме меллĕ кĕреплесем ăсталать т. ыт. те. Майне пĕлсен пур çĕрте те ăнăçу пулатех.

Ĕç ветеранне, хисеплĕ ватăна ачисемпе мăнукĕсем те манмаççĕ, килсех тăраççĕ. Халĕ унăн 10 мăнук, 4 прамăнук. Емĕр тăршшĕпех тĕрĕс çулпа утнă, йĕркеллĕ пурăннă çĕр ĕçченĕ, авторитетлă ветеран халĕ те хăйĕн принципĕсенчен пăрăнмасть. Леонид Трофимович чăннипех нумай çыншăн ырă тĕслĕх пулса тăрать, унран вĕренмелли, ăса хывмалли сахал мар. Хăш-пĕр чухне вара вăл çав тери кирлĕ те.

А. ЧЕРНОВА.

Сăн ӳкерчĕкре: Л.Т. Каргин бригада ĕçченĕсемпе.

Вулакан пултарулăхĕ

Пĕрремĕш вĕрентекен

Тăхăр çул вĕрентĕм ку шкулта,
Пурнăç хытă шăвать малалла.
Пĕрремĕш вĕрентекен ялан асра,
Йывăр пулĕ унпа сыв пуллашма.
Вăл пире вĕрентрĕ вулама,
Çынсемпе йĕркеллĕ калаçма,
Ватăсене ялан пулăшма,
Çĕр çинче пурне те юратма.
Эпир пурте сирĕн умăрта
Питĕ пысăк-пысăк парăмра.
Тавах сире вĕрентнĕшĕн пире.
Юратса сывлăх сунар сире.

Сергей КАЗАМБАЕВ,
Атапай шкулĕ, 9 класс.